# Типнĕ шыв

## (повесть сыпăкĕ)

— Эпир вĕçеве тухасси нумаях юлмарĕ, карап пайĕсем мĕнле ĕçленине çĕнĕрен тĕрĕслеççĕ. — Нэхит çаврака пӳлĕм тӳрлениччен тăхтарĕ те хăй кĕнĕ алăка аллипе тĕллесе кăтартрĕ. — Çавăнтан тухатпăр.

Ачасем урайĕнчен хунарĕсене çĕклерĕç, Эля хăва вуллисен çыххине тирпейлесе тытрĕ.

Кашнин пуçне ыйтусем пăраларĕç: «Нэтлы планетинчен вĕçсе килнĕ экспедици пуçлăхĕ мĕнле этем-ши? Вĕсемпе Йэлокин мĕн çинчен калаçĕ-ши?»

«Тен, пире вĕсем карапран кăлармĕç те! Тен, хăйсемпе пĕрлех сӳнсе пыракан Нэтлы халăхĕ валли пурăнма юрăхлă планета шырама лартса кайĕç», — вĕлтлетрĕ сасартăк Вадим пуçĕнче шиклĕ шухăш.

Çав канăçсăр шухăша илтнĕ пекех Нэхит ачасене лăплантарса каларĕ:

— Ан пăлханăр. Йэлокин юлташ йăваш çын, унпа та хăвăра манпа калаçнă пекех лăпкă тытăр. — Малта Нэхит утса пычĕ, ун хыççăн — ачасем. Ансăр

коридорта та, кантăк евĕр витĕр курăнакан стеналлă хаш-пĕр пӳлĕмсенче те сарă шевлесем пĕр-пĕрин урлă ирте-ирте выляççĕ.

— Хĕвел шевлисем пекех кусем, — терĕ Тихан.

— Вĕсене Йэлокин юлташ сирĕн ятпа ятарласа кăларса янă.

— Хĕвел шевлисене те тытма пултаратăр-и эсир? — тĕлĕннине пытармарĕç ачасем.

— Пултаратпăр. Вĕсене хупса усрамалли ятарлă камера пур пирĕн. «Пысăк Ункă» экипажĕн членĕсем мĕншĕн те пулин тунсăхлама пуçласан командир яланах çак шевлесене çынсем ĕçлекен пӳлĕмсенче выляттарса çӳретет.

Часах вĕсем çаврака аслă зала çитсе кĕчĕç. Унта сарă шевлесем сиккелемеççĕ. Анчахрах ачасем çывăрна пĕчĕк пӳлĕмри пекех маччапа урайĕнчен япшар çемçе çутă са-ланать. Стенаран та çавăн пекех. Анчах кунти стенасенче çĕнĕлĕх пур: самай пысăк ултă çаврака кантăк. Урайĕпе маччара та ачасем çавăн пек çаврака пĕрер кантăк курчĕç. Кантăксене хура чаршав карнă пек туйăнать — ара, карап ĕне ферми çумĕнчи çĕр

айёнче вырнаçнă-çке-ха. Хальлĕхе çавăнпа хура тĕслĕ ĕнтĕ вĕсем. Çăлтăрсен Аслă Ункинче вĕçсе çӳренĕ чухне карап командирĕ çак кантăксенчен галактикăри лару-тăрăва сăнаса пырать пулмалла.

Ачасем зала кĕнĕ чухне стена çине ӳкернĕ пысăк картта умĕнче тăракан патвар кĕлеткеллĕ арçын çынсен ури сассине илтсе вĕсен еннелле çаврăнчĕ, çуллĕ вырăнтан аялалла анчĕ, ачасене кашнинех пуçĕсенчен çепĕççĕн ачашларĕ. Пичĕ унăн Нэхитăннинчен те типшĕмрех, пĕвĕпе унтан çӳллĕрех, пуçĕнче пĕр çӳç пĕрчи те çук. Куçĕсем çаврака, пысăк. Вĕсенчен ачасене темĕнле ăнланмалла мар ăшă çапса тăрать.

Вăл Нэхита ют чĕлхепе темĕн каларĕ, ку вара ăна чăвашла куçарса пачĕ:

— Сирĕн чĕлхене вĕренме ĕлкĕрейменшĕн каçару ыйтать «Пысăк Ункă» экипажăн командире.

— Эсир, Йэлокин юлташ, миçе çулта? — Вадима каллех вăй кĕчĕ.

— Çĕр вăтăр çиччĕре, — куçарчĕ Нэхит.

Пуçлăх ачасене хăйĕн умне çаврака пукансем çине лартрĕ.

— Пирĕн «Пысăк Ункă» карапа лайăхрах курса юлас килет, — терĕ Тихăн.

Йэлокинпа Нэхит хăйсем хушшинче калаçрĕç те, Нэхит çӳлелле улăхса çĕршер кнопкăллă доска çинче пĕрне пӳрнипе пусрĕ.

— «Пысăк Ункă» тепĕр сехет çурăран галактика еннелле вĕçсе тухать. Савăнпа унăн тĕрлĕ пайĕсене çуран курса çӳреме вăхăт сахал пирки экипаж командиĕ сĕннипе ăна сире экран çинче кăтартатпăр. — Нэхит ачасене хирĕç стенара туха пуçланă кадрсене ăнлантар-ма тытăнчĕ: — Ку вăл — карап хыççăн вĕçекен оранжерея. — Ачасен куçĕ умĕнче вуншар тĕрлĕ йывăç, тĕм, ӳсен-тăран шуса иртрĕ. Кашниййĕнех çимĕççем пур: хашĕсене пан улмипе, чие çырлипе, хăярпа, çĕр улмипе, ыраш, тулă пучахĕсемпе танлаштарма пулать, анчах хăнасен çимĕçĕсем пурте Çĕр çинчинчен икĕ-виçĕ хут пысăкрах. Унта пĕр чĕрĕ чун та курăнмасть — пĕтĕм ĕçе машинăсем тăваççĕ пулас. Пĕр çĕрте çеç çын мĕлки шуса иртрĕ.

— Робот, — терĕ Нэхит.

Кадрта — темĕнле аппаратсем умĕнче ларакан

виçĕ çын.

— Карап мимине ĕçлеттерекенсем: тĕп навигатор, тĕп инженер тата тĕп рулевой.

Кадрсем хăвăртрах ылмашăнма тытăнчĕç. Нэхит та васкаса ăнлантарчĕ:

— Библиотека... Тĕп астроном хăйĕн вырăнĕнче выртать... Шыв колби. Двигательсен уйрăмĕ. Çыхăну антеннипе радиотелескоп. Столовăй. Кану залĕ. Спорт клубĕ, кинотеатр. Экипаж тухтăрĕ. Сăмах майăн каласан, пирĕн экипажра чи ватă çын вăл кăçал çĕр çитмĕл çул тултарчĕ... Конструктор пайĕ. Технологсем. Йэлокин юлташăн ĕç пӳлĕмĕ. Эп ĕçлекен пӳлĕм. Бассейн. Боксер арени. Шахматистсем ăмăртса выляççĕ... Ну, ывăнмарăр-и пăхса?

— Чарар, Нэхит юлташ, — терĕ Эля, — пире кун чухлĕ курнипе те çитет. Сирĕн ахаль те вăхăт çук.

— Сирĕн умра эпир мĕн виличчен парăмра, çамрăк туссем. Хăвăра çапла чĕнме ирĕк паратăр-и? Сирĕн çынсем ĕçес шыв пулăшнипе эпир хамăр вĕçеве малалла тăсатпăр. Нэтлы халăхне çăлса хăварма çĕнĕ планета тупмаллах пирĕн. Тупатпăр та!

— Нэхит юлташ, эсир карап çинче мĕнле ĕç таватăр?

— Çăлтăрсем енĕпе ĕçлекен штурман эпĕ, Йэлокин юлташăн пĕрремĕш çумĕ. — Нэхит экипаж командирне каллех темĕн çинчен хĕрӳллĕн ăнлантарма пуçларĕ. Йэлокин унпа килĕшсе пуçне сĕлтрĕ, унтан Эля хăва турачĕсен çыххине аллипе тĕллесе хăйсен чĕлхипе темĕн каларĕ.

— Эля, экипаж командире сирĕн алăри япалапа интересленет.

— Пирĕн патра шыва юратакан йывăç ӳсет. Акă вăл, хăва. Вăл пулăшнипе эпĕ кĕçĕр пĕр çĕрте çĕр айĕнче шыв юххи тупрăм.

— Мĕнле майпа?

Эля арçын ачасене пăхса илчĕ, куçĕпе вĕсенчен калама юрать-и тесе ыйтрĕ.

— Ан хăра, Эля, — хавхалантарчĕ ăна Тихăн, — кала.

— Ĕлĕкрех те пĕрре пирĕн тăрăхра шăрăх çанталăк пулнă: çăлсем типнĕ, тырăсем ӳсеймен, утă та çавăнпах пуçтарайман. Мĕнле пурăнмалла? Ман асатте çамрăк

хăвасем касать те ял тăршшĕпе упаленсе тухать. Пĕр çĕрте çамрăк хава ерипен чĕтреме пуçланине сисет асатте, хăва тарри çĕр патнелле пăртак усăннине курать. Вăл сĕннипе арçынсем çав тĕлте тӳрех çăл алтма тытăнаççĕ. Асатте шыв юхăмне тупрăм тесе улталаман — çăл часах сивĕ, таса шывпа тулнă.

— Аслаçу мĕнле тавçăрнă-ха апла шырама? — Вадим Эля çумнерех куçса ларчĕ.

— Пĕчĕк чухне хăйĕн аслашшĕнчен илтнĕ пулнă. Мана вăл хăй виличчен каласа кăтартнăччĕ... Эпĕ ĕненмерĕм, юмах ку тесе шухăшларăм ăшăмра. Анчах çавна ĕнер ăнсăртран аса илтĕм те тĕрĕслесе пăхас терем... Ку ĕçре питĕ сисĕмлĕ пулмалла, кашни çын алли туяймасть пулас хăва чĕтренине.

— Тупрăр-и шыв? — Нэхит та тĕлĕннĕ пек пулчĕ.

— Тупрăм. Ыран тĕрĕслемелле алтатпăр.

— Хăш тĕлте? — ыйтрĕ Нэхит. — Тăкăрлăкра мар-и?

— Çавăнта. Ăçтан пĕлетĕр?

— Куртăм сире эпĕ. Типĕ çăлтан тухсан... Пĕр ĕçпе пынăччĕ те...

— Эпир те асăрхарăмăр пĕр çын çăл пуринчен тухнине. Сирĕн ура йĕрĕсене те тĕрĕслерĕмĕр. Мĕншĕн унашкалах путнă çĕр ăшнелле вĕсем?

— Унта эпĕ ĕç тумĕпе пынăччĕ...

— Утăм тăршшĕ...

— Хăвăрт çӳремелли механизм пурччĕ ман. Ура йĕрĕсене пĕтермелли прибора тӳрех ĕçлеттерме тытăнман иккен эп.

— Ку апла веçех паллă. — Вадим хăюлăхĕ татах ӳсрĕ. — Ферма витин кĕтессинче кам тăчĕ?

— Мидэв астроном. Карапран çĕр çине тухни чирне кăштах çăмăллатмĕ-ши тенĕ вăл.

Кун хыççăн Нэхит «Пысăк Унка» карап командирне ачасемпе мĕн çинчен калаçнине хăвăрт куçарса пачĕ. Тихăн вара ашĕнче çапла шухăшларĕ: «Ман асанне хăй пĕчĕк чухне шăрăхра шыв мĕнле тупни çинчен Эльăн мăн аслашшĕнчен илтме пултарнă». Вăл стена çинчи мăн картта тăрринче тата айĕнче хăйсем çывăрнă çаврака пӳлĕмри пекех çырса хунине асăрхарĕ. Тихăн ют сас паллисемпе çырнă карттăна аллипе тĕллерĕ.

— Мĕн тенĕ çавăнта?

— Çӳлте: «Тăван çĕршывна нихăçан та ан ман», аял-та: «Сана та Тăван çĕршыву нихăçан та манмасть», — тесе çырса хунă.

Çĕр вăтăр çичĕ çулхи Йэлокин ларнă çĕртен тăчĕ те çӳллĕ вырăна хăпарса анчĕ, аллинчи ручка евĕр япалапа темĕн çырса кантăк майлă материал çине сăн ӳкерчĕне ачасене пĕрер тыттарчĕ.

— Тĕл пулнă ятпа парнелет, Аслă Канаш умĕнчи яваплăха каллех хăй çине илет, — вашаватланчĕ Нэхит Сăнĕ. — Йэлокин пирĕн планета çинчи аслă ученăй.

Ачасем нэтлы ученăйне парнешĕн тав туса пуçĕсене тайрĕç.

— Кэрэ мэк бэмутэрлын сэн бэксылынтыр?

— Сирĕн çĕр лаптăкĕ мĕн пысăкăш? — тесе ыйтать ученăй.

— Чăваш Республикин-и?

— Çапла, сирĕн республикăн.

— Вун сакăр пин тăваткал километртан кăшт ытларах.

— Сирĕн республикăра тăракан шăрах сиенне ăнланать Йэлокин, талккăшĕпех ыран çумăр çутарать. «Пысăк Ункă» экипажне шыв панăшăн ырă сунни пулать ку.

— Ăна та пултаратăр-и?

— Пĕлĕт татки тӳпере пулсан.

— Кӳршĕ республикăсемпе облаçсенче те çанталăк типĕ тăрать-ха... — Эля ассăн сывласа илчĕ.

— Вун сакăр пин тăваткал километртан ытларах çĕр çине çумăр çутарма вăй çитеймест пирĕн... Миçе çăл-ха сирĕн ялта?

— Хĕрĕх çиччĕ.

— Ыран хĕрĕх çиччĕшĕнчен те шыв ăсатар.Эльăсен умĕнче, вăл çынсем валли хăва турачĕпе шыв шыранине шута илсе, çĕнĕ çăл пулать.

Йэлокин ачасене каллех пуçĕсенчен ачашласа тухрĕ те картта патне улăхрĕ.

— Пирĕн командир сирĕнпе сывпуллашрĕ. Галактикăна, çăлтăрсен Аслă Ункине вĕçеве тухатпăр! Нэхит ачасене аллисенчен тытрĕ. — Атьăр, сире ăсатса яратăп.

Ачасем аслă ученăя алă сулчĕç, Нэтлы халăх валли лайăх планета тупма ырă сунчĕç.

— Мĕнле вĕçсе тухăр-ши эсир çĕр айĕнчен, Нэхит юлташ, — ыйтрĕ Вадим.

— Ăна никам та асăрхамĕ.

— Эпир те-и?

— Эсир те.

— «Пысăк Ункă» тăнă çĕрте çĕр хăвăллипнса, ишĕлсе юлать-çке.

— Хамăр хыçран эпир нихçан та йĕр хăвармастпăр.

Тепĕр ик-виç минутран вĕсене Нэхит ĕне ферминчи шыв башнин стенинчи бетон стенари алăкп уçса типĕ çăл тĕпне кăларчĕ.

— Урăх эпир нихçан та тĕл пулмастпăр-ши? — Тунсахлăн илтĕнчĕ Эля сасси.

— Эпир хамăра пулашнă Çĕр чăмăрне нихçан та мастпăр. Кун çинчен Аслă Канаша «Пысăк Ункăран» хыпар янине пĕлетĕр эсир. Пирĕн экспедици çăлтăрсен Асла Унки енне çула тухнă вăхăтрах Аслă Канашра галактикăри планетăсем пурăнакан халăхсен туслă

обществине туса хурасси çинчен калаçатчĕç. Часах Нэтлы халахĕ Хĕвел системинчи Çĕр ятлă планета çинче çынсем пурăннине пĕлĕ, сирĕн халăхсемпе çыхăну йĕркелесе яма йышăнĕ. Пĕр-пĕрне нумай пулăма пултаратпăр эпир. — Нэхит карап çинчи çĕр вăтăр çичĕ çулхи ученăй пекех ачасене пуçĕсенчен ăшшăн ачашларĕ те бетон алăкпа башня çăлĕнчен каялла хăвăрт кĕчĕ.

Тĕттĕм. Арçын ачасем хунарĕсене çутрĕç. Шăп.

— Хăпаратпăр! — Тихăн хĕр ачана хулĕнчен тытрĕ те тимĕр пусма патнелле утрĕ.

— Тăхтăр-ха! Бетон алăк лайăх хупăннă-и? — Вадим çăл стенине тимлесе пăхрĕ, унтан аллипе хыпашларĕ, пуçне пăркаларĕ.

— Мĕн, аллуна ыраттартăн-им? — ыйтрĕ Эля.

— Алăк ниçта та çук! Йĕрĕ те юлман!

— Тăнна çухатрăн-и эс? — Эля кулса ячĕ. — Нэхит каларĕ вĕт ниçта та йĕр хăвармастпăр тесе. — Атя часрах çӳлелле, аттун кунта пĕчченех юлатăн.

Çуррине улăхса çитсен аялта шыв шапăртатнă пек туйăнчĕ. Хунарĕсен пайăркисене унталла ячĕç те

ачасем вĕтĕ чуллă хăйăр витĕр аялтан шыв кăпăкланса тухнине курчĕç.

— Ур-ра! — саванаçлăн кăшкăрса ячĕ Эля. — Çирĕп тытаççĕ хăйсен сăмахне «Пысăк Ункă» карап çыннисем!

Башня тулашĕнче çăл тĕпĕнчинчен чылай ăшă. Тухăçран тул çутăлса килет. Тӳпере çăлтăрсем унта-кунта çеç вăйсăррăн мĕлтлетеççĕ.

— Пĕлĕт татки! Куратăр-и, пĕлĕт татки! — татах савăккăн кăшкăрчĕ Эля. — Апла пулсан çумăр та паянах çăвать. Эх, хăш çăлтăрĕ патне çывхарса пыраççĕ-ши çак вăхăтра Нэтлы ученăйĕсем?

— Ферма тавра çаврăнмастпăр-и? Тен, карап шăтăк туса хăварнă?

— Вадим, ан сӳпĕлтет. Çутă пайăркинчен икĕ хут хăвăртрах вĕçекен карап çыннисем нихаçан та суймаççĕ! — Эля Нэхита хĕрӳллĕн хӳутĕлерĕ.

Тăкăрлăка çитрĕç. Унти çăла пуçĕсене пĕксе пăхрĕç — шыв çурри тран тулнă. Нэхитăн урисем хăварнă икĕ йĕре ирхи çутăпа тимлесерех тĕпчесшĕнччĕ, анчах иккĕшĕ те çухалнă. Эля сĕннипе

чул катăкĕ хурса хăварнă тĕлте йăлтăртатакан металтан тунă пура куçа илĕртсе ларать — унта та шыв туллиех. Килĕсене çитиччен урамри кашни çăла тĕрĕслерĕç вĕсем, кашнинчех — эрне ытла кĕтнĕ шыв.

Тихăнсен умĕнчи çырма пĕвинче те шыв тулма пуçланă...

Эля хăйсен килĕ умĕнчи тĕрлĕ тĕспе йăлтăртакан хитре пурана аякранах асăрхарĕ, ун патне чăн малтан чупса çитрĕ. Унти шывран пит-куçа сулхăн çапать.

Хĕвел тухрĕ.

Анăçри пĕчĕк пĕлĕт татăкĕ хăвăрт сарăлса пырса тĕпене хуплама тытăнчĕ.

Эля витрепе çекĕл йăтса тухрĕ, çĕнĕ çăлтан ăснă шыва малтан хăй антăха-антăха тăраниччен ĕçрĕ, ун хыççăн арçын ачасем.

Шывĕ тăрна куçĕ пек таса, сивĕ, тутлă.

— Нэхит калани пĕтĕмпех пурнăçланчĕ. Анчах Нэхлы планетинчен вĕçсе килнĕ «Пысăк Ункă» карап çыннисемпе кĕçĕр тĕл пулса калаçнине мĕнле ĕнентерĕпер халăха? — Вадим шухăша путнă.

Эля кантăк евĕр материал çине ӳкернĕ çĕр вăтăр

çичĕ çулхи ученăй сăнне платье кĕсийинчен туртса кăларчĕ.

— Ку мĕн? — тепĕр енче алă пуснине кăтартрĕ. — Ку тата мĕн?

— Чимĕр-ха, Нэтлы планета çинчи халăх тахçан-тахçанах пирĕн халăхпа тăванлă пулман-ши? — Тихăн ялкăшса илчĕ, тепĕр курка сиплĕ шыв ĕçрĕ. — Нимĕн те асăрхамарăр-и эсир вĕсен ячĕсенче?

— Ячĕсенче — çук, анчах сăнĕсем...

— Çапла, сăнĕсем те чăваш сăнне асилтсреççĕ. Анчах ячĕсене вĕçĕнчен пуçласа вуласа пăхăр-ха.

— Йэлокин — Николай!

— Нэхит — Тихан.

— Мидэв — Вадим!

— Нэтлы — ылтан!

Сасартăк кантăк уçăлчĕ, Эля амăшĕ кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ:

— Кĕçĕр те пĕве хĕрринче çĕрĕпех лартăр-и? Ахалех вăхăт ирттеретĕр, часах унта шапа та кваклатма

чарӑнать!..

Ҫав вӑхӑтра анӑҫри пӗлӗтсем хӑмӑрланчӗҫ. Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ, аслати кӑлтӑртатнӑ сасӑ вӗҫсе ҫитрӗ.

—Паян ҫумӑр ҫӑвать, анне!

—Тем пекехчӗ... Виҫсӗрӗн те хырӑмӑрсем хыр тӑрне кайрӗҫ пуль. Кӗрӗр, хуран кукли ӑшӑтса ҫитерем.

Крыльцана кӗме ҫеҫ ӗлкӗрчӗҫ ачасем, пӳрт тӑррине витнӗ тимӗр ҫинче ҫумӑр тумламӗсем ташлама пуҫларӗҫ. Ҫав кун иртен пуҫласа каҫченех хӗвеллӗ ӑшӑ ҫумӑр ҫурӗ...

*1988.*

*Краснов, Г.* **.** *Типнӗ шыв : [фантастикӑлла повесть сыпӑкӗ] Ё Г. Краснов ЁЁ Чӑваш литературин антологийӗ.* - *Шупашкар, 2015.* - *[Т. 4] : Ача-пӑча валли ҫырнӑ хайлавсем.* - *С. 276-279.*